Саккуна пăхăнассин ыйтăвĕсемпе

# Пулă тытассипе те йĕркене пăхăнмалла

Пирĕн çут çанталăк запасĕсем пуян. Кусем вĕсем çĕрсем те, шывсем те, вăрмансем те, шывсенчи пулă запасĕ те. Вĕсемпе усă курассине патшалăх йĕркелесе пырать.

Пулă запасĕсене хӳтĕлессине вара пĕр саккунпа кăна палăртса хуман. Кун пирки Раççей Федерацийĕн Конституцийĕнче те, РФ Шыв кодексĕнче те, Раççей Уголовнăй кодексĕнче те, Раççей Федерацийĕн Административлă право нормисене пăснин кодексĕнче те, «Тавралăха сыхласси çинчен», «Çут çанталăкăн уйрăмах упракан территорийĕсем çинчен», «Вылăх-чĕрлĕх тĕнчи çинчен», «Раççей Федерацийĕн континентри шельфĕ çинчен» Федераллă Саккунсенче те каласа хăварнă.

Пулă тытассине йĕркелесе пырассипе тата вĕсен йышне сыхласа хăварассипе йышăннă саккунсем пĕрре анчах мар пулин те, браконьерлă майпа пулă тытнă тĕслĕхсем сахал мар тĕл пулаççĕ. Вĕсемпе кĕрешесси чи пĕрремĕш тивĕç пулса тăрать.

Ытларах чухне çакă чарнă тапхăрта саккуна пăсса пулă тытнипе çыхăннă. Браконьерсем пулăна чарнă вырăнсенче тата вăлча сапнă тапхăрта, вĕсем вăлча сапма каякан çулсем çинче тытаççĕ.

Пулă тытмалли майсем тĕрлĕрен. Анчах та чи анлă сарăлнисенчен пĕри вăл – тетелпе (сетьпе) усă курни. Çакă вара саккуна пăсса пулă тытни шутланать.

Саккун çавăнпа саккун та. Пулă тытассипе йĕркене пăснăшăн, пулă вăлча сапнă вырăнта е вĕсем вăлча сапма каякан çулсем çинче саккуна пăсса пулă тытса пысăк сиен кӳнĕшĕн, ку тĕлĕшпе хăй тĕллĕн çӳрекен транспорт хатĕрĕсемпе тата сирпĕтмелли, химилли хатĕрсемпе, электричество токĕпе тата массăллă пĕтермелли ытти хатĕрсемпе усă курнăшăн айăплисене уголовнăй майпа айăплама пăхнă. Айăплав 100 пин тенкĕрен пуçласа 300 пин тенкĕ таран штраф парассипе, 2 çул таран сроклăха ĕçлесе юсанмалли вырăна ярассипе, 4 уйăхран тытăнса 6 уйăх таран арестлессипе çыхăннă.

Кун пек преступленисем пирĕн район территорийĕнче те пулмаççĕ мар. Ытларах чухне вĕсене Шупашкар шыв хранилищин территорийĕнче Ильинка ялĕ çывăхĕнче тупса палăртнă. Атăлпа Каспи пулă хуçалăхĕн бассейнĕнче пулă тытмалли правилăсемпе 2009 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса июлĕн 10-мĕшĕччен пулă тытма чарнă пулин те, йĕркене пăсакансем сахалах мар.

Анализ çавна кăтартса парать. Ытларах чухне çак преступленисене тăвакансем ĕççĕррисем, унччен уголовнăй майпа айăпланманнисем. Вĕсен социаллă тытăмĕ тĕрлĕрен: вĕсем хушшинче пенсионерсем те, çамрăккисем те, авланнисем тата çемйисенче çул çитмен ача пуррисем те пур. Ялан тенĕ пекех пулăна хăйсем усă курма тытаççĕ.

Акă В. гражданин пенсионер ĕнтĕ. 2009 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕнче вăл Шупашкар шыв хранилищинче Ильинка ялĕ çывăхĕнче пулăсем вăлча сапнă вырăнта тата вĕсем вăлча сапма каякан çулсем çинче пулă тытмалли тетел вырнаçтарнă. Çапла хăтланнипе вăл пулăсене массăллă пĕтермелли хатĕрпе усă курни шутланать. Çапла майпа вăл хĕрлĕ куç пулă 3 тата тепĕр çупах тытнă. Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи 2-мĕш номерлĕ суд участокĕн мировой судйин приговорĕпе 2009 çулхи июнĕн 19-мĕшĕнче асăннă гражданина Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 256-мĕш статйин 1-мĕш пайĕн «б» тата «в» пункчĕсемпе çыхăннă преступление тунă тесе айăплама тиврĕ.

Б. гражданин вара ниçта та ĕçлемест. 2009 çулхи июнĕн 3-мĕшĕнче вăл хăй тĕллĕн ишекен «Прогресс–4» транспорт хатĕрĕпе усă курса Атăл юхан шывĕ çинчи Ильинка çывăхĕнчи Шупашкар шыв хранилищине ишсе кĕнĕ, унта пулăсем вăлча сапнă вырăнта тата вĕсем вăлча сапма каякан çулсем çинче пулă тытмалли тетел вырнаçтарнă. Çапла майпа вăл хĕрлĕ куç пулă 6 тытнă. ЧР Муркаш районĕнчи 2-мĕш номерлĕ суд участокĕн мировой судйин 2009 çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕнчи приговорĕпе ку хутĕнче те ниçта та ĕçлемен çын РФ Уголовнăй Кодексĕн 256-мĕш статйин 1-мĕш пайĕн «б» тата «в» пункчĕсемпе çыхăннă преступлени тунă тесе йышăннă.

Çавна та каласа хăварасшăн. Айăплисем тĕлĕшпе наказани парассин виçи пысăкрах та пулма пултаратчĕ. Ку хутĕнче вара айăпланакансен социаллă тытăмне, çемйисенче çул çитмен ачасем пуррине, вĕсем хăйсен айăпне пĕтĕмпех йышăннине тата ӳкĕннине, ытлашши пысăк сиен кӳменнине шута илсе саккунсăр йĕркепе пулă тытакансене чи пĕчĕк виçе таран кăна штрафларăмăр.

**Е. НИКИТИНА,**
**ЧР Муркаш районĕнчи 2-мĕш номерлĕ суд участокĕн мировой судйи.**

Пенси ыйтăвĕсемпе

# Социаллă çăмăллăхсемпе усă курас килмесен

***Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансенчен чылайăшĕ (Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсем, тĕрлĕ хирĕç тăрусенчи çапăçусен ветеранĕсем, инвалидсем, вăл шутра ачаранпах инвалидсем т. ыт. те) социаллă çăмăллăхсемпе усă курма тивĕç. Унта çаксем кĕреççĕ:***

***– тӳлевсĕр майпа хушма медицина пулăшăвĕ илесси, вăл шутра эмелсемпе, тĕрлĕрен медицина изделийĕсемпе, инвалид-ачасене сиплев апатланăвĕн ятарлă продукчĕсемпе тивĕçтерессипе те, санаторисемпе курортсене сипленме кайма путевкăсемпе тивĕçтерессипе те;***

***– хула çывăхĕнче чукун çулпа тӳлевсĕр çӳресси, хуласем хушшинчи транспортпа сипленмелли вырăна çитме тата каялла укçа тӳлемесĕр çӳресси.***

**– Социаллă çăмăллăхсене укçан илессипе улăштарма пулать-и-ха?**

– Федераллă законодательствăпа кун пек меле пăхса хунă. Федераллă çăмăллăхсемпе усă курма та, вĕсемшĕн укçан илме те пулать. Кунпа пĕрлех çавна та палăртса хăвармалла. Социаллă пĕтĕм çăмăллăхсемшĕн е пĕр пайĕшĕн укçан илме те пулать. Сăмахран, медицина пайĕшĕн е тӳлевсĕр çӳрессишĕн укçан илсе тăма та ирĕк пур.

Çавна валли октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр Пенси фондне пырса социаллă çăмăллăхсенчен пĕтĕмпех е пĕр пайĕнчен хăтарма ыйтса заявлени çырса парас пулать.

Соцпакетăн пĕтĕмĕшле виçи хальхи вăхăтра уйăхне 641 тенкĕпе танлашать. Вăл шутра медицина пайĕ (врач рецептĕпе эмелсем тӳлевсĕр парасси, врач сĕнĕвĕпе санаторисене каясси) – 570 тенкĕ, транспорт пайĕ (хула çывăхĕнчи чукун çул транспорчĕпе тӳлевсĕр çӳресси, санаторисене тата каялла тӳлевсĕр çӳресси) – 71 тенкĕ.

**– Социаллă çăмăллăхсенчен хăтарассин тата вĕсемпе усă курма тытăнассин ансатлă йĕрки пирки пĕлес килет.**

– 2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса социаллă çăмăллăхсемпе усă курассине пăрахăçлассин йĕркине ансатлатнă. Хальхи вăхăтра социаллă çăмăллăхсем вырăнне укçан илсе тăрасси пирки Пенси фондне пырса заявлени çырма кирлĕ мар. Кун пирки 2008 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче йышăннă 269-ФЗ номерлĕ Федераллă саккунра каланă.

Калăпăр, 2008 çулта эсир 2009 çулта социаллă çăмăллăхсем вырăнне укçан илсе тăрасси пирки заявлени çырса панă тейĕпĕр. Хыççăнхи çулсенче те эсир хăвăрăн шухăша улăштарас теместĕр, социаллă çăмăллăхсем вырăнне укçанах илсе тăрас тетĕр пулсан, сирĕн заявлени çырма кирлĕ пулмасть.

Хăвăрăн шухăша улăштартăр пулсан вара октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса социаллă çăмăллăхсемпе е вĕсен пĕр пайĕпе усă курма тытăнасси пирки Пенси фондне пырса заявлени çырса пама тивет.

Пирĕн районта федераллă социаллă çăмăллăхсемпе усă куракансем 3120 çын. РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ çулталăк пуçланнăранпа соцпакетшăн е унăн пĕр пайĕшĕн укçан илесси пирки 366 заявлени йышăнчĕ. Соцпакетпа усă курма вара 11 çын заявлени çырса пачĕ.

Социаллă çăмăллăхсем усă курмалли правăпа пуçласа усă курма тытăннă чухне те заявлени çырмалла.

**– Хăйсене кирлĕ информацие мĕнле телефонпа илме пулать-ха?**

– Социаллă çăмăллăхсемпе усă курасси е уншăн укçан илесси пирки ыйтусем пулсан, пенсионерсем Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн районти управленине 62-8-91 телефонпа шăнкăравласа пĕлме пултараççĕ.

**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

Врач канашĕ

# Ачасен сывлăхĕ те аслисенчен килет

***Сывлăх кашни çыннăн пурнăçĕнчи тĕп никĕс шутланать. Унран хакли нимĕн те çук. Сывлăх пулсан çеç ытти пĕтĕмпех йĕркеленсе пырать. Апла пулсан ăна ачаранах упрамалла. Ачасен сывлăхĕ пирки калаçма вара паян редакцие Муркашри тĕп больницăри район педиатрне Маргарита Петровна САВЕЛЬЕВАНА чĕнтĕмĕр.***

**– Ача тата сывлăх. Çак темăпа нумай калаçма пулать паллах. Пирĕн районта ачасен сывлăхĕ пĕтĕмĕшле илсен мĕнлерех?**

– Раççей Федерацийĕн «Вĕрентӳ çинчен» саккунĕнче ачасен сывлăхĕ вĕрентӳ сферинчи патшалăхăн приоритетлă енĕ тесе палăртнă. Çавăнпах районан администрацийĕ, педагогсем тата медицина ĕçченĕсем «Сывлăхлă ача», «Сывлăхлă апатлану» тата ытти тĕрлĕ тĕллевлĕ программăсене тĕпе хурса ĕçлени ачасен сывлăхне лайăхлатса пыма май парать. Ачасен сывлăхĕ халĕ, тепĕр 10 çултан та мĕнле пуласси вара аслисенчен килет.

Пĕтĕм тĕнчери сывлăха сыхлакан организаци палăртнă тăрăх, тĕнчери кашни виççĕмĕш çын – ача. Пирĕн районта вара – кашни тăваттăмĕш. Районти ачасен 74 проценчĕ тĕрлĕ коллективсенче – шкулсенче, ача сачĕсенче. Çавăнпа та ачасене сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарса пырасси шăпах çак учрежденисен тивĕçĕ пулса тăрать те.

Раççейри медицина наукисен академийĕн педиатрийăн наукăпа тĕпчев институчĕ пирĕн çĕршыври ачасенчен 14 проценчĕ çеç сывă тесе çирĕплетнĕ. 25-30 процента яхăн ача вăраха кайнă чирсемпе аптăрать иккен. Пирĕн вара 2008 çулхи çулталăк пĕтĕмлетĕвĕсем çапларах: районта сывă шкул ачисем пурĕ 19,6 процент чухлĕ тесе палăртрăмăр, ача сачĕсенче вара çакнашкаллисен хисепĕ 20,8 процентпа танлашать. Вăраха кайнă чирпе чирлекенсем вĕренекенсем хушшинче 9,8 процент, шкул çулне çитменнисем хушшинче – 4,6 процент. Шкулсене тата ача сачĕсене çӳрекенсен 70 процентне яхăн «риск» ушкăнне кĕреççĕ.

**– Унта мĕнле ачасем кĕреççĕ-ха?**

– Ачасенчен ытларахăшĕ çурăм шăмми тӳрĕ маррипе, плоскостопи тата 1 степеньлĕ сколеоз пулнипе сывлисен шутне кĕмеççĕ. Кунсăр пуçне тата куç япăх курни, кариес та – час-час тĕл пулакан чирсем.

**– Сиплев тата профилактика ĕçĕсем апла пулсан ача хăш сывлăх ушкăнне кĕнине тĕпе хунипе пулса пыраççĕ?**

– Сывă ачасене (1-мĕш ушкăна кĕреççĕ) кашни çулах планланă медицина тĕрĕслевĕсене пăхатпăр. Ультразвук аппаратчĕсемпе пĕр хутчен ачан чĕрине, пӳрисене тата хырăмлăхри ытти органсене те тĕрĕслемеллех. Çулталăкне икĕ хутчен шăл тухтăрĕсем патĕнче пулмалла, шăлсене юсасах тăмалла. 10-12 çултан хĕр ачасен гинеколог пӳлĕмне те кĕрсе кирлĕ сĕнӳ канаш илме вăтанмалла мар. Туберкулез чирне вăхăтра тупса палăртасси те профилактика ĕçĕсен шутнех кĕрет. Çавăнпа та çулталăкра пĕр хут Манту реакцине тумалла. 15 çул тултарнă хыççăн вара флюорографи тĕрĕслевне иртмелле. Инфекци чирĕсенчен сыхлакан е вĕсене сарăлма паман вакцинацисене те план тăрăх туса пыратпăр.

2-мĕш сывлăх ушкăнĕ чи пысăкки шутланать («риск» ушкăнĕ). Çак ушкăна кĕрекен ачасемпе ĕçлесси апатланăва тĕрĕс йĕркелесине те, гигиена правилисене пăхăннине те, кирлĕ хускану сем тунине те, сиен кӳрекен йăласене пăрахнине тата ытти енсене те пĕр тытăма пуçтарать. Çак ачасемпе профилактика ĕçĕсене пур енлĕн пĕр харăс туса пыни çеç вĕсене сывлăхлисен шутне кĕртме май парать. Çак тĕллевпе ĕçлеççĕ те районти медицина ĕçченĕсем.

Вăл е ку чире тупса палăртнă ачасен вара тăтăшах врачсем патĕнче тĕрĕсленсе вĕсем панă сĕнӳсене пурнăçламалла. Физкультура занятийĕсенче вĕсен ятарлă программăпа ĕçлесе пымалла.

**– Ачасен «переходный возрасчĕ» те пур вĕт-ха. Çак вăхăтра ашшĕ-амăшĕсен, педагогсен мĕн çине тимлĕх уйăрмалла?**

– Пĕтĕмĕшле12 çултан пуçласа (хĕр ачасен иртерех те) ачасен организмĕ улшăнма тытăнать: кĕлетке çитĕнет, иммунитет вара çак вăхăтра хавшама пултарать. Çавăнпа та ачасене психика енĕпе те, вăй хурса ĕçлеттерессипе те уйрăмах тимлĕ пăхмалла. Шăпах çак вăхăтра сиенлĕ йăласене пăхăнмалла марри çинчен, сывлăха упраса пурăнмалли çинчен ытларах калаçмалла ачасемпе, ырă тĕслĕх кăтартмалла. Ашшĕ-амăшĕн, учительсен тĕслĕхĕ уйрăмах витĕмлĕ.

Çак вăхăтра ачасен апатланăвĕ те çителĕклĕ пулмалли çинчен манмалла мар. Врачсемпе канашланă хыççăн тĕрлĕ витаминсем те йышăнма юрать.

**– Тавах, Маргарита Петровна, интереслĕ калаçушăн.**

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Сĕнӳ

# Ĕçе вырнаçас тетĕр пулсан

Çавна палăртмалла. Ĕçе вырнаçас текен çын унпа калаçнă чухне хăй кулăша ăнланма пĕлнине кăтартса пама пултарать пулсан, унăн ĕçе вырнаçас шанăç пысăкрах. Superjob тĕпчев центрĕн аналитикĕсем çирĕплетнĕ тăрăх, ĕç паракансен виçĕ пайĕнчен иккĕшĕ кулăша хаклама пĕлет.

Çакна персонал енĕпе ĕçлекен 500-е яхăн менеджерпа кадрсем енĕпе ĕçлекен ытти специалиста ыйтса тĕпченĕ хыççăн палăртма май килнĕ. Вĕсем палăртнă тăрăх, кулăша ăнланакан çынсемпе канма кăна мар, ĕçлеме те интереслĕрех.

Çакна та палăртса хăварни вырăнлă. Çын мĕн чухлĕ ытларах ĕçлесе илет, вăл çавăн чухлĕ лайăх шӳтĕн производство вăйĕ çине ытларах шанать. Уйăхне вăтамран 15 пин тенкĕрен каярах ĕçлесе илекен респондентсенчен 46 проценчĕ шӳт-юмор ĕçре пулăшать тесе палăртнă. Уйăхне 25–35 пин тенкĕ ĕçлесе илекенсем хушшинче вĕсен хисепĕ вара 54 процент, 45 пин тенкĕ ытла ĕçлесе илекенсем хушшинче 67 процент.

Шӳт шӳтпе те, виçине те пĕлес пулать. Енчен те сирĕнпе калаçакан çыннăн шӳтлес кăмăл çук пулсан, хăвăрăн та лăпкăрах пулни кирлĕ.

Çĕнĕ сăвăсем

# Асатте çапла калатчĕ

Пушар хуралĕ пирĕншĕн тăтăш сыхăра тăракан структура. Йывăр вăхăтра эпир яланах вĕсенчен пулăшу кĕтетпĕр. Пушарнăйсем вара инкекре пулăшнипе пĕрлех профилактика ĕçĕсенче те ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ. Пирĕн умра Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта 2-мĕш класра вĕренекен Сергей Суриковăн сăввисем. Шкул ачи çак шухăшлава ума кăларма пултарни ытти ачасемшĕн те хăйне евĕр паллă: пушарпа пĕрле кĕрешмелле, пушар хуралĕнче тăракансене туллин чысламалла. «Çак сăвăна ĕç ĕмĕрне пушар хуралĕнче ирттернĕ юратнă асаттене, Кашмаш ялĕнче пурăннă, çĕр ĕçĕнчен катара тăман Михаил Михайлович ВЕРЕНДЕЕВА халалласа çыртăм», – тет автор хăйĕн пĕрремĕш хайлавĕ пирки.

Сăмах май М. М. Верендеев – Муркашри пушар чаçĕн малтанхи ĕçченĕсенчен пĕри. Хăйĕн ĕçĕпе вăл çамрăксене вутçулăм кӳрекен инкеке хирĕç хăюллă тăма та, пушă вăхăтра савăк канма та хăнăхтарнă. Мăнукĕ ăна сăвă халаллани ку енĕпе ĕç малалла тăсăлнине пĕлтерет.

Çирĕм çичĕ çул ĕçленĕ асатте
Районти пушар хуралĕнче.
Тен, пушарнăй пулнăран çапла
Вăл калатчĕ хытарса мана:
«Мăнукăм, асăрхан вут-кăвартан,
Шăрпăкпа ан выля нихăçан!
Тухрĕ пулсан пушар ăнсăртран,
Шаларах кĕрсе, мăнукăм, ан пытан.
Тухса чуп эс хăвăрт урама,
Телефонпа нуль пĕрре шăнкăравла!
Хăв ятна пĕлтер те адресна кала,
Мĕскер çунать тата – çавна каламалла...», –
Çапла калатчĕ асатте яш чух,
Ун сăмахне нихçан эп манас çук.
Шăллăма халь эпĕ вĕрентетĕп:
«Асатте мана çапла калатчĕ», – тетĕп.

Пушар – хăрушă япала
Пушартан эсир сыхланăр,
Вăл – хăрушă япала.
Шăрпăкпа, туссем, ан выльăр,
Тимлĕ пулăр унпала!
Ахаль мар ĕнтĕ калаççĕ
Ваттисем çак сăмаха:
«Вăрă-хурахран юлаççĕ,
Пушартан юлмасть вара».